25-мĕш çул пухать. Хакĕ 15 пус.

1942 АВГУСТ 2 ВЫРСАРНИКУН 179(6114) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔ, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Чугунçул çинчи работникĕсен хисеплĕ тивĕçĕ

1933 çулта июлĕн 30-мĕшĕнче Кремльре Сталин юлташ тата партипе правительство руководителĕсем чугунçул çинче ĕçлекенсене [illegible]. Унтанпа çулленех августăн пĕрремĕш вырсарникунне пĕтĕм железнодорожниксен кунне Пĕтĕм Союзри [illegible] палăртаççĕ.

Çак кун [illegible] хут ăнтă отечественнăй вăрçă пынă вăхăтра çитет. Вăрçă чугунçул транспорчĕ умне—Хĕрлĕ Çарăн тăван [illegible] умне—пысăк та ответлă задачăсем хăларса тăратрĕ. Чугунçул транспорчĕ фронта войскăсем, хĕçпăшалсем, боеприпассем, [illegible] вăхăтра турттарса тăмалла. Унпа пĕрлех [illegible] заводсене, [illegible] кирлĕ [illegible] материалсене [illegible] памалла. Сталин юлташ [illegible] приказĕ [illegible] задачăсене пурнăçлас ĕçре чугунçул транспорчĕ [illegible].

Фашистла çынçиенсене хирĕç пыракан вăрçă [illegible] железнодорожниксем Хĕрлĕ Çарăн çапăçура [illegible] пулса тăнине кăтартрĕ. Фронтра те, тылра та железнодорожниксем [illegible] ĕçлеççĕ, паттăрлăхпа хăюлăх кăтартаççĕ. Фронт тĕрăхĕнчи чугунçул работникĕсем тăшман [illegible] бомбисен айĕнчех поездсене йĕркеллĕн илсе çÿреççĕ. Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине çитерсе параççĕ.

Сталин юлташăн [illegible] 1-мĕшĕнчи приказне [illegible] чугунçул çинче социализмлă ăмăрту [illegible]. [illegible] Лунин [illegible] мелĕсене [illegible].

Социализмлă ăмăрту ытти станцисен ĕçĕсене те лайăхлатма пулăшрĕ. Шупашкар станцийĕ, ку таранччен юлса пынăскер, юлашки вăхăтра йĕркеллĕ ĕçлекен станцисен хисепне кĕчĕ. Вăрнар, Çĕмĕрле станцийĕсен коллективĕсем те ăмăртура малти вырăна тухассишĕн, фронт нушисене лайăххăн тивĕçтерессишĕн кĕрешеççĕ. Вăрнар станцинчи опытлă стрелочник Михаил Попов, Йĕпреç станцинчи стрелочниксем В. Герасимов, Г. Клюковкин юлташсем, ĕçре Лунин мелĕсемпе усă курса, будкăсене, стрелка хуçалăхĕсене государство укçи-тенкине тăкакламасăр юсаççĕ.

Транспортри работниксен паха ĕçĕсене кăтартакан çакăн пек тĕслĕхсене татах та нумай илсе кăтартма пулать.

Пĕлтĕр чугунçул транспорчĕн кунĕнче железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри воскресникне туса ирттерчĕç, тăван çĕршывăн оборона фондне [illegible] тенкĕ ĕçлесе пачĕç. Кăçал те çак кунхине—августăн иккĕмĕшĕнче—чугунçул транспорчĕн работникĕсем, служащисем воскресникне тухаççĕ, фронтпа çĕршывшăн ĕçлеççĕ.

Железнодорожниксен хăйсен кунне [illegible] паровозсем, вагонсем юсанине, [illegible] тата [illegible] палăртаççĕ.

[illegible] транспорт [illegible] çĕршыв оборонине тĕрекелетме пулăшĕ.

Анчах транспорта çирĕплетесси, фронта мĕн кирлине вăхăтра тата пурне те парса тăрасси—пĕр железнодорожниксенех ĕçĕ çеç мар. [illegible]

Транспорт работникĕсен умĕнче халĕ [illegible].

Транспортри ĕçсен [illegible] дисциплина [illegible].

Депосемпе мастерскойсен работникĕсен паровозсемпе вагонсене юсанă чух вырăнти материалсемпе ытларах усă курмалла, запаслă чаçсене, оборудованисене, инструментсене харпăрхăй вăйĕпех тума тăрăшмалла. Товарнăй станцисен руководителĕсен фронта кирлĕ грузсене турттарассине ÿстермелле. Çав вăхăтрах пассажирсен ыйтăвĕсене кирлĕ пек тивĕçтерес пулать, вĕсен хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе анлăн туса пырас пулать, революциллĕ сисĕмлĕхе ÿстермелле.

Партин 18-мĕш конференцийĕн решенийĕсем чугунçул транспортне пĕр кăлтăксăр ĕçлемелли майсене кăтартса параççĕ. Железнодорожникăн тивĕçĕ — çав решенисене пурнăçа чыслăн кĕртесси, графика тĕпе хурса, пур участоксемпе звеносенче те тĕрĕс те тикĕс ĕçлесси.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 31-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Июлĕн 31-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Клетская, Цымлянская** районĕсенче тата **Батайскран** кăнтăралларахрипе кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри вырăнсенче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче пăлтă улшăнусемех пулман.

* * *

Июлĕн 30-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 56 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 230 автомашинине, горючи тултарнă 20 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен икĕ складне тата горючи усракан икĕ склада сирпĕнтерсе янă, полевой тата зенитнăй артиллерин 16 батарейине пусарса лартнă, чугунçул çинчи икĕ состава çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине 4 ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

Баренц тинĕсĕнче флотăн авиацийĕ противникăн 15.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Воронежран кăнтăралларахра противник икĕ хут контратака тунă. Артиллерипе минометсенчен персе, пирĕннисем гитлеровецсене каялла сирсе янă, вĕсене пысăк çухатусем тÿстернĕ. Нимĕçсен пехоти, танксем пулăшса пынипе, Акимов лейтенантăн ротине атакăланă. Тăшманăн атакине сирнĕ чухне пирĕн боецсем, гранатăсем тата çунакан хутăш тултарнă бутылкăсем ывăтса, нимĕçсен 4 танкне çунтарса янă тата 80 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Клетскаяран кăнтăралларахри районра пынă çапăçура нимĕçсен 48 танкне, 17 противотанковăй тата 10 йывăр орудине, 21 автомашинине, 3 броневикне пĕтерсе тăкнă. Виçĕ танк тата пĕр самолет тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн танкистсем нимĕçсен юсавлă 10 танкне тытса илнĕ те вĕсене çавăнтах гитлеровецсене хирĕç çапăçăва кĕртсе янă.

* * *

Цымлянская районĕнче противникăн Дон шывĕ урлă каçнă группировкине хирĕç вăйлă çапăçусем пынă. Пирĕн пĕр соединенин участокĕнче кăна нимĕçсен 9 танкне, 15 орудине, 23 пулеметне тата минометсен 8 батарейине пĕтерсе тăкнă. Противникăн 1000 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ.

* * *

Батайскран кăнтăралларахрипе кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри вырăнсенче пирĕн войскăсем противника хирĕç оборонăллă йывăр çапăçусем туса пынă. Уйрăм участоксенче юнлă çапăçу пулса иртнĕ хыççăн пирĕн чаçсем çĕнĕ рубежсем патне чакнă. Нимĕçсен çав çапăçура 13 танк, 18 оруди тата 600 çын ытла пĕтнĕ. Противникăн моторизованнăй колоннипе танксен группи пирĕн чаçăн флангне кĕрсе кайнă пулнă. Совет боецĕсем противотанковăй орудисемпе пăшалсенчен персе, 5 танка тата 7 автомашинăна çунтарса янă. Унтан пирĕн танксемпе пехота контратака тунă. Нимĕçсен колоннине темиçе пая уйăрнă та вĕсене пайăн-пайăн пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче вырăнти çапăçусем пулса пынă. Нимĕçсем пирĕн войскăсем йышăнса илнĕ халăх пурăнакан пункта каялла тытса илме хăтланнă. Бомбардировочнăй авиаци пулăшнипе гитлеровецсем пирĕн позицисене икĕ хут атакăланă. Важенин юлташ командир пулса тăракан чаçри боецсем тăшмана артиллерирен, минометсенчен тата пăшалсемпе пулеметсенчен вăйлăн персе кĕтсе илнĕ. Нимĕçсен 300 салтакпа офицера çити вилсен, вĕсем каялла чакнă. Пирĕн зенитнăй артиллери нимĕçсен 5 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче артиллерипе пулеметсенчен сайра хутра перкелесе тăнă. Пирĕн артиллери противникăн темиçе блиндажне çĕмĕрнĕ, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, разведка тăвакан темиçе группине тата икĕ ротăна çити пехотине сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Н-ски соединенири снайперсем юлашки вунă кун хушшинче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 260 çынна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград облаçĕнчи партизансен Д. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ противникăн икĕ эшелонне ÿпĕнтерсе янă. 50 вагон çĕмĕрĕлнĕ, вĕсенчен нумайĕшĕ çине автомашинăсемпе танксем тиенĕ пулнă. Вагонсен ванчăкĕсем айĕнче нимĕç оккупанчĕсем 300 çынна çити пĕтнĕ.

* * *

Финсен 11-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 50-мĕш полкран тыткăна лекнĕ салтак Юхо П. çапла каласа панă: «Финлянди тăкăрлăка пырса кĕнĕ. Промышленноçра ĕçсем питĕ начар пыраççĕ. Ялхуçалăхĕ юхăнса кайнă. Хресченсенчен нумайĕшĕ çуркунне хăйсен çĕрĕн çуррине çеç акса хăварнă. Ĕçлекен çын çитмен тата вăрлăхпа удобрени пулман. Халăх нимĕçсене кураймасть, вăл вĕсене Финляндин мĕнпур асапĕсемшĕн айăплă тесе шутлать. Нумаях пулмасть Тампер хулинче нимĕçсем ĕçсе иртĕнсе ларнă ресторана такам темиçе граната пăрахнă. Вăрмансенче фронтран тарса кайнă нумай салтак пытанса çÿрет. Вĕсем нимĕçсемпе шюцкоровецсене тыта-тыта пĕтерсе параççĕ».

* * *

Нимĕçсен фашистла çынçиенĕсем каламе çук тискер ĕç туни çинчен хыпар илнĕ. Июлĕн пуçламăшĕнче Днепропетровскра нимĕçсем паровоз мастерскойĕнче ĕçлекен 150 рабочие Германие ĕçлеме кайманшăн тытса хупнă. Гитлерла ирсĕрсем çав тытса хупнă рабочисене 7 кун хушши выçă усранă, унтан вĕсене хула хыçне илсе тухнă та персе вĕлернĕ.

Августăн 1-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Августăн 1-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетская, Цымлянская** тата **Батайскран** кăнтăралларахрипе кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районсенче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕн улшăну та пулман.

* * *

Клетская районĕнче хаяр çапăçусем пынă. Танксен Н-ски чаçĕ тăшманăн пехотипе танкĕсене хирĕç çапăçнă. Противникăн войсковой чаçĕсен 2 штабне, 12 противотанковăй орудине, 2 танкне, 3 бронемашинине тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1.500 çынран кая мар пĕтерсе тăкнă.

* * *

Батайскран кăнтăралларахрипе кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри вырăнсенче пирĕн войскăсем противникăн мотопехотипе танкĕсене хирĕç йывăр çапăçусем туса пынă. Нимĕçсем, войско нумай илсе пырса тăратса, хăйсен ăнăçăвĕсене малалла ÿстерме тăрăшаççĕ. Тытăçусем час-часах штык вĕççĕн тăрса, юн нумай юхтарса çапăçнипе вĕçленеççĕ. Пирĕн пĕр часть нимĕçсен авиаци пулăшса пынă танкĕсемпе пехотихĕснине пĕр талăк хушши тытса чарса тăнă. Хăюллă боецсем нимĕçсен 17 танкне çунтарса янă тата 1.100 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Анчах противник çапах та пирĕн часть вырăнаçса тăнă вырăна çĕмĕрсе кĕме пултарнă. Вара çапăçу оборона районĕ ăшĕнче пуçланса кайнă. Тепĕр участокра совет чаçĕсем çĕнĕ рубежсем патне чакнă.

* * *

Брянск фронтĕнче вырăнти çапăçусем пулса пынă. Танксен Горлаг капитан командир пулса ертсе пыракан подразделенийĕ юлашки кунсенче нимĕçсен 30 танкне тата 400 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллерин пĕр батарейи тăватă кун хушшинче тăшманăн 18 танкне, ултă кĕпçеллĕ минометне, минометсен 3 батарейине тата пĕр зенитнăй батарейăна стройран кăларнă, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Бронебойщиксем сержант Луценко юлташ тата красноармеец Дмитриев юлташ противникăн атакине сирсе янă вăхăтра нимĕçсен 2 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Белорусси районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен Н. юлташ ертсе пыракан отрячĕ виçĕ кун хушшинче 226 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Июль уйăхĕнче çав отрядри партизансем противникăн 2 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Кÿршĕри районра кĕрешекен те пĕр отрядри партизансен ушкăнĕ горючи хунă склада вут тивертсе çунтарса янă. Вут-çулăмра 120 тонна бензин тата 40 тонна сĕрмелли çусем пĕтнĕ.

* * *

Нимĕçсен 138-мĕш полкĕнчи пĕрремĕш дивизионăн 3-мĕш батарейинчен тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Антон Типлер çапла каласа панă: «1942 çулти мартра 138-мĕш зенитнăй полка аркатса тăкрĕç, вăл материальнăй чаçсăр тăрса юлчĕ. Çавăнтан вара ăна темиçе хутчан те çынсем тата çĕнĕ орудисем хушса-хушса панă. Июль пуçламăшĕнче пĕрремĕш дивизионăн мĕнпур орудийĕсенчен тата пĕтĕм составĕнчен каллех сурри ытла пĕтнĕ. Çав дивизион Воронеж районĕнче шыв урлă каçсассăн ăна пĕтĕмĕшпех çапса çĕмĕрнĕ. Унăн сахаллăн тăрса юлнă юлашкийĕсене вара тыткăна илнĕ».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем хăйсем тытса илнĕ совет районĕсенчи халăха пĕтерсе пыраççĕ. Курск хули хĕрринче гитлеровецсем граждăнла халăх валли лагерь туса хунă. Çав лагерьте, йĕплĕ пралук тытса çавăрăннăскерте, хĕрарăмсемпе стариксем тата çамрăк ачасемпе çитĕнсе çитмен çынсем 500 çын ытла пурăнаççĕ. Çавăнта çынсене чи йывăр ĕçсем ĕçлеттереççĕ. Выçăпа аптăраса тата тискеррĕн асаплантарнине пула вăл лагерьте кулленех 5—10-шар çын вилет.

* * *

Гамбург хулинче (Германия) юлашки вăхăтра продовольстви ĕçĕ ытла та çивĕчленсе кайнă. Çав хулари çынсем пĕр эрне хушшинче çăкăр пĕр грамм та илмен. Хулара тиф сарăлса кайнă. Июлĕн 26-мĕшĕнче Гамбургра выçă çынсен демонстрацийĕ пулса иртнĕ. Хĕрарăмсен ушкăнĕ продовольстви темиçе склачĕпе темиçе магазинне аркатса тăкнă. Гестаповецсем, демонстрантсене салатса ярас тесе, хĕçпăшалпа усă курма тытăннă. 45 çынна вĕлернĕ е амантнă. Полици нумай çынна тытса хупнă.

Тырпула большевикла пухса кĕртер, кахалсемпе ĕç дисциплинине пăсакансене хирĕç кĕрешер!

Кĕреплеллĕ çавасене вăхăтра хатĕрлемен

КУКЕÇ. Апаш ялсоветĕнчи «Урожай», «Крахмал», «Трудовик» колхозсем июлĕн 30-мĕшĕнче ыраш вырма тытăнчĕç. Ĕçе тухсан малтанхи кун колхозниксем ыраша суйласа çурласемпе вырчĕç, иккĕмĕш кун пур жнейкăсемпе те вырма тытăнчĕç.

Ялсоветĕнчи колхозсем уборкăна хатĕрленнĕ чухне, тырăсене кĕреплеллĕ çавасемпе вырассине хак паман пирки, çавасене кирлĕ таран туса хатĕрлемен. Колхоз руководителĕсем тырăсене кĕреплеллĕ çавасемпе çулма тăрăшмашни пысăк йăнăш пулса тăчĕ. Халĕ колхозсенче, ыраша кĕреплеллĕ çавапа çулса пăхнă хыççăн, унпа ĕçлеме питех те лайăххине колхозниксем куçкĕретĕнех курчĕç. Вăхăтра туман ĕçе тÿрлетсе, колхозсем халĕ васкасах кĕреплеллĕ çавасем тăваççĕ. Нумай тырра çавапа çулса пухма шутлаççĕ

Л. ЛАСТУХИН.

Кунта тырă вырма васкамаççĕ

СЕНТЕР, августăн 1-мĕш. (Телефонпа). Енер «Çĕнĕ Юнга», «Ударник» колхозсем ыраш вырма тухрĕç. «Çĕнĕ Юнга» колхозăн бригадисем уйрăм участоксене суйласа вырма организованно тытăнчĕç. 4-мĕш бригадăра малтанхи кунах 54 колхозник хĕрсе ыраш вырчĕç.

Районри ытти колхозсен уйхирĕнче те ыраш вырмалла пулса çитнĕ. Çапла пулсан та, нумай колхозсем ыраша вырăнăн-вырăнăн суйласа вырма ÿркенсе тăраççĕ-ха. Сĕнтĕрти Фрунзе ячĕпе тăракан колхоз жнейкăсене те юсаса çитермен.

С. НАЛИМОВ.

Машинăсемпе туллин усă кураççĕ

ВĂРМАР, июлĕн 31-мĕш. (Хамăр корр.). Умра тăракан ответлă задачăсене ăнланса илсе, Чупайри «Дружба» колхоз членĕсем çак кунсенче фронтри пек хастарлăн ĕçлеççĕ. Колхоз хăйĕн пĕтĕм ĕçне фронт ыйтнă пек туса пырать, кашни колхозникпе колхозница, ответлă работниксенчен пуçласа шкул ачисем патне çитиех, кулленхи хĕрÿллĕ ĕçре хăйне хăй фронтри пек тыткалать.

Колхоз уборкăна тĕплĕн хатĕрленсе июлĕн 29-мĕшĕнче тухрĕ. План тăрăх кĕрхи тырăсем 358 гектар, çурхи тырăсем 438 гектар пухса кĕртмелле. Хăйсен ĕç планĕнче колхозниксем кĕрхи тырăсене 5 ĕçкунĕ хушшинче, çурхи тырăсене 7 ĕçкунĕ хушшинче вырса пухма палăртнă.

Уборкăна колхозниксем ĕçе пĕр çын пек организованно тухрĕç. Жнейкăсемпе, лобогрейкăсемпе пĕр чарăнусăр тырă выраççĕ. Кĕреплеллĕ çавасемпе вырассине колхозницăсем уйрăмах ырласа йышăнчĕç. Колхоз пурĕ 130 çава хатĕрленĕ, малтанхи кунах ыраша звеносем кĕреплеллĕ çавасемпе вырма тытăннă. Ĕçĕн пахалăхĕ питĕ лайăх. Çулакансем тырра аркатмасăр тикĕс хурса пыраççĕ.

Колхоз уборкăри ĕçсене кăтартуллăн организациленĕ. Колхоз председателĕ коммунист Григорьев юлташ уйра колхозниксен вăйне вырнаçтарса тухассине уйрăмах пысăк вырăна хунă. Колхозра халĕ кашни çын хăйĕн вырăнĕнче куллен пысăк тухăçлăхпа ĕçлет. Колхозăн 6 бригада, вĕсенче 24 звено. Уборкăри ĕçсен планне те çакна шута илсе тунă. Кашни звенона уйрăм участок тата ĕç хатĕрĕсем уйăрса панă. Çапла халĕ тырă вырнă çĕрте çеç куллен 465 çын ĕçлет. Вăл шутра тĕрлĕ ответлă вырăнсенче ĕçлекен çынсем те, шкул ачисемпе подростоксем те. Уборка вăхăтĕнче вĕсем те уйра кулленех хĕрÿллĕн ĕçлемелле.

Уборкăн малтанхи кунĕнчех бригадăсемпе звеносем тата колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлчĕ. Кунта кашни колхозникпе колхозница Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн активлă участникĕ пулса тăрать, уборкăра кăтартуллăн ĕçлеме вĕсем хăйсем çине кашниех обязательствăсем илнĕ. Малтанхи кунсенче 5-мĕш бригада (бригадирĕ Алексеев) ăмăртура малти вырăна тухрĕ.

Колхоз правленийĕ ĕç учетне лайăх йĕркеленĕ. Ĕçкунĕсене бригадирсем кашни кунах шутласа тухса колхозниксен ĕç кĕнекисем çине кĕртме сведенисем параççĕ. Колхозниксен ăмăрту договорĕсене кулленех тĕрĕслесе тăраççĕ.

Тырăсене вырас ĕçе лайăх туса пынипе пĕрлех, «Дружба» колхоз кăçал строительство ĕçне те туса пырать. Колхоз строительствинче кашни кунах çĕр çынна яхăн ĕçлет. Вĕсем нумайĕшĕ хĕрарăмсем. Строительсен бригади кăçал тырă типĕтмелли сушилка, икĕ овощехранилище, тырă хумалли 7 склад çĕнĕрен туса лартнă. Халĕ бригада 100 ĕне вырнаçтармалăх ăшă вите тăвать. Бригадăна опытлă столярсем—11 колхозник ертсе пыраççĕ, вĕсем ертсе пынипе строительствăра хĕрарăмсем те алла пуртă, сава тытса ĕçлеççĕ.

П. НИКОЛАЕВ.

Комбайнсен агрегачĕсем ĕçе тухрĕç

ШАХАСАН, июлĕн 31-мĕш. (Телефонпа). Машинно-тракторнăй станцин бригадисем июлĕн 30-мĕшĕнче ыраша комбайнпа вырма пуçларĕç. Ыраш вырмачи малтан пĕрремĕшпе иккĕмĕш бригадăсен комбайн агрегачĕсем тытăнчĕç. Иккĕмĕш бригадăри комбайнер комсомолка Ф. Самсонова кăçал хăйĕн комбайнĕпе 225 гектар вырса пухма обязательство илсе, ĕçе хастарлăн тытăнчĕ.

Ыран-паянах МТС-ăн пур бригадисем те тырă вырма тытăнассĕ

Çитменлĕхсене халех пĕтермелле

ШАХАСАН, июлĕн 31-мĕш. (Телефонпа). Районри малта пыракан колхозсем тырра суйласа вырма тытăнчĕç. Энтриял ялсоветĕнчи «Герой», «Пионер», «Комсомол», «Трактор» колхозсем ĕнер ыраш вырма йĕркеллĕн тухса малтанхи гектарсене вырчĕç. Ку колхозсенче малтанхи кунах жнейкăсем те лайăх, пĕр чарăнусăр ĕçлеме тытăнчĕç. Çавăн пекех Калинин, Киров ячĕсемпе тăракан, Высоковкăри Сталин, Çĕнĕ Мамшри Ворошилов ячĕсемпе тăракан колхозсем те тырра вырăнăн-вырăнăн суйласа вырма организованно тухрĕç. Паянхи куна районри колхозсем 35 гектар ытла ыраш вырнă.

Анчах та уйрăм колхозсем тырăсене вырса пухма халĕ те хатĕрленсе çитмен. Тĕслĕхрен, «Новый путь» колхоз уборка вăхăтĕнчи ĕç планне халĕ те туман. Колхозăн 3 жнейка, вĕсене пĕрине те юсаман, транспорт инвентарĕсемпе лаша кÿлмелли хатĕрсем çитмеççĕ, кĕреплеллĕ çавасем пачах туман, колхозра мĕнпурĕ те 10 михĕ çеç. Çавăн пекех Питикассинчи Сталин ячĕпе тăракан колхозра та жнейкăсем юсавлă мар.

Кăçал тырпулсене вăхăтра пухса кĕртменни çĕршыв умĕнче преступлени туни пулать. Уборкăна тухма хатĕрленсе çитмен колхозсен çак кунсенче хăйсен ĕçне хăвăртлатмалла. Колхоз руководителĕсем çакна ăнланса илме тивĕç: тырпулсене вăхăтра, пĕр кун кая юлмасăр, пĕр тăкаксăр пухса кĕртмелле. Уборкăна пĕр кун кая юлса тухсан — гектарта пĕр центнер тырă тăкăнса юлни пулать.

Çакна районри хăшпĕр колхоз руководителĕсем шута илмен-ха. «Молодой колхозник» колхоз уйĕнче ыраш вырмалла пулнă. Анчах колхоз халĕ те ăна вырма тытăнман. Жнейкăсен çĕççисене хăйраттарман, кĕреплеллĕ çавасем хатĕрлемен, урапасем те çитмеççĕ.

В. ЯКОВЛЕВ, С. ШАДИН.

Уйăхри плана ăнăçлăн тултарнă предприятисем

КАНАШ, июлĕн 31-мĕш. (Телефонпа). Вагонсем юсакан заводри ăмăртура Токарев юлташăн Хĕрлĕ ялавлă цехĕ малта пырать. Вăл июль уйăхĕнче государство планне 25 кун хушшинче, оперативнăй плана 29 кун хушшинче тултарчĕ, лайăх пахалăхлă продукци пачĕ.

Соколовский юлташ начальник пулса тăракан цех коллективĕ те уйăхри плана срокчен тултарчĕ.

Железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри кунне кĕтсе илме хатĕрленнĕ май, цехри стахановецсем çĕнĕ çитĕнÿсем турĕç. Июлĕн 28-мĕшĕнче нормăна токарь Абрамова юлташ 523 процент, Миневич юлташ 424 процент, Владимиров юлташ 404 процент тултарчĕç.

Вагонсем юсакан цехри рабочисем те пысăк çĕкленÿпе ĕçлеççĕ. Капелюха юлташăн Хĕрлĕ ялавлă бригади çак уйăхри ĕç планне 25 кун хушшинче тултарчĕ. Юлашки кунсенче вагонсене планран ирттерсе юсарĕ. Уйăхри плана, çавăн пекех, Высоцкий, Чернухин, Ефимов тата Марков юлташсен бригадисем те ăнăçлăн тултарчĕç.

Г. СОРОКИН.
Заводри партбюро секретарĕ

* * *

Шупашкарти çăкăр комбиначĕ июль уйăхĕнчи производство планне тоннажĕпе те, васкавлă заказсем енĕпе те ытлашшипех тултарчĕ. Бригадăсем хушшинчи социализмлă ăмăртура 1-мĕш пекарньăри Жигалин, 2-мĕш пекарньăри Колударов бригадисем мала тухрĕç. Вĕсем хăйсен уйăхри заданисене чылай ирттерсе тултарчĕç. Васкавлă заказсене пурнăçлакан Макарычев, Тружикин бригадисем те заданисене кашни кун вăтамран 150-шар процент тултарса ĕçлерĕç.

А. МАТВЕЕВА.

* * *

Шупашкарти эрех завочĕ (директорĕ Г. А. Фройман юлташ) июль уйăхĕнчи программăна ытлашшипех тултарчĕ, материалсене 4 процент перекетлерĕ. Çак çитĕнĕве завод коллективĕ вăрçă вăхăтĕнчи пек тухăçлăн ĕçлесе турĕ. Рабочисем пурте ăмăртăва хутшăннă, пурте нормăна тултараççĕ, вĕсенчен 70 процентчĕ стахановецсем шутланаççĕ.

Июль уйăхĕнчи ăмăртура К. Малышева юлташ ертсе пыракан цех тата Беляшовăпа Захарова юлташсен бригадисем лайăх ĕçлерĕç.

Фронта пулăшас ĕмĕтпе

ÇĔРПУ. Ялсенче лотерея билечĕсене 487 пин тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Колхозниксем, фронта вăйлăрах пулăшассишĕн пулса, лотерея билечĕсен укçине çийĕнчех тÿлеççĕ. Июлĕн 29-мĕш тĕлне пурĕ 422 пин тенкĕ пухса панă. Йĕкĕрвар, Рындино, Нĕрĕш тата Çĕнĕ Сала ялсовечĕсенчи колхозниксем лотерея билечĕсене илме çырăннă кунсенчех укçине те тÿлесе татнă.

М. ЯКОВЛЕВ.

Железнодорожниксем, эсир сталинла вахтăра,— Пурне те фронта çитерер вăхăтра!

5-мĕш дистанцире

КАНАШ, августăн 1-мĕш. (Телефонпа, хамăр корр.). Хусан чугунçулĕн 5-мĕш дистанцийĕнче ĕçлекенсем (дистанци начальникĕ Светоозерский юлташ) железнодорожниксен кунне ĕçре çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илчĕç. Пĕтĕм Союзри ăмăртăва хутшăннă хыççăн вĕсем чугунçул линисене чылай лайăхрах тытса тăма пуçларĕç. Уйрăмах кутĕлĕшпе 3-мĕш околодокра (Энĕшпуç разъезчĕ) ĕçлекенсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем чугунçул шпалĕсене те хăйсемех тăваççĕ. Кунти мастер М. Дмитриев, çулсене пăхса тăракансем Е. Федорова, Л. Кузьмин юлташсем ĕçре пример кăтартаççĕ.

Ăмăрту кунĕсенче тăрăшса ĕçлесе, çул çинчи чылай работниксем мухтава тивĕçлĕ пулчĕç. 37-мĕш участокри бригадира И. Каюков юлташа Хусан чугунçулĕн управленийĕ таз тунă, 8-мĕш околодокри работниксене Кудряшовпа Александров юлташсене грамотăсем парса наградăланă. Малта пыракан рабочисенчен 10 çынна дистанци начальникĕ «Ĕç фрончĕн отличникĕ» значокпа наградăлама палăртнă.

Дистанци мастерскойĕнчи Газиковпа Павлов работниксем час-часах рационализаторла сĕнӳсем парса, рабочисен ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăшаççĕ.

Станцин паллă çыннисем

ÇĔМĔРЛЕ, августăн 1-мĕш. (Телефонпа). Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, станци работникĕсенчен кашниех обязательствăсем илнĕччĕ. Илнĕ обязательствăсене пурнăçласси шĕн çине тăрса кĕрешни станци ĕçне лайăхлатма пулăшрĕ. Июль уйăхĕнче поездсене расписани тăрăх ăсатса тăтăмăр. Станци дежурнăйĕсем А. Литонин, С. Потапов, стрелочниксем Л. Пырикова, И. Бочков, А. Смирнова, Л. Липатова, И. Сабункин юлташсем пĕр браксăр, простойсăр ĕçлеççĕ, техникăллă эксплоатацин правилисемпе Çулĕçр Халăх Комиссарĕн приказĕсене тĕрĕс пурнăçлаççĕ. Стрелочниксенчен Пыриновăпа Смирнова юлташсем стрелка хуçалăхне Лунин меточĕсемпе у 1 курса юсаççĕ.

Маневровăй паровозсен машинисчĕсем Ф. Самсонов, Храмов юлташсем хăйсен паровозĕсене яланах юсавлă тытаççĕ, топливăна перекетлеççĕ. Вĕсем пирĕн станцин чи лайăх çыннисем шутланаççĕ.

Н. ФИЛИППОВА,
Станцири парторганизацин секретарĕ.

Малтанхи çитĕнӳсем

Шупашкарти чугунçул станцийĕн коллективĕ социализмлă ăмăртура хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатрĕ. Иртнĕ вăхăтра пирĕн станци юлса пыракан станци шутланатчĕ: поездсене расписани тăрăх ăсатни çукчĕ, вагонсем часчасах ахаль ларатчĕç, таварсем тиесе ямасăр выртатчĕç. Ĕçе лайăхлатма пире социализмлă ăмăрту тата железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри Кунне тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленни пулăшрĕ. Июньпе июль уйăхĕсенче эпир поездсене расписани тăрăх ăсатса тăтăмăр, вырăнти вагонсем ахаль ларассине нумай чакартăмăр, таварсене вагонсем панă хыççăнах тиесе ятарпăр. Çав çитĕнӳсемшĕн станци коллективне Хусан чугунçулĕн Юдински отдел управленийĕ тав турĕ, малта пыракан работниксене, дежурнăй Мавловпа весовщик Бриман юлташсене укçан премилерĕ.

Халĕ эпир станцире йĕркелĕхпе тасалăх кӳме тăрăшатпăр: вокзал çуртне юсатпăр, перрон çине асфальт сарма хатĕрлетпĕр. Июлĕ 2-мĕшĕнче чугунçул работникĕсен воскресникне ирттеретпĕр.

Ф. ПОДГОРНОВ,
Станци начальникĕ.

Фронта пулăшассишĕн

ВĂРНАР, августăн 1-мĕш. (Телефонпа). Июнь уйăхĕнчи ăмăртура пирĕн станци коллективĕ малти вырăнсенчен пĕрине йышăнчĕ. Июль уйăхĕнче те эпир начар мар ĕçлерĕмĕр. Поездсене хамăр айăппа тытса тăни пĕрре те пулмарĕ, пурне те расписани тăрăх ăсатса тăтăмăр. Вагонсене тиес тата пушатас плана пĕтĕмпех тултартăмăр. Çавна май вагонсем ахаль тăрасси чылай чакрĕ. Вырăнти вагонсене, сăмахран, нормăпа пăхнинчен 4 сехет хăвăртрах тиесе ятпăр.

Вăрçă кунĕсенче пирĕн работниксем хăйсен ĕçри ответлăхне татах та ӳстерчĕç, ĕç дисциплинине çирĕплетрĕç. Юлашки вăхăтра ĕç законĕсене, технически эксплоатацин правилисене пăсни пачах пулман.

Чылай работниксем фронтри пек тимлĕн те хăвăрт ĕçлеççĕ. Стрелочник М. Петров юлташ чугунçул çинче 1926-мĕш çултанпа ĕçлет. Вăл пирĕн станцири чи опытлă, чи лайăх железнодорожник шутланать. Лунинăн ĕç меточĕсемпе усă курса, М. Петров юлташ стрелочниксен будкисене государство укçине тăкакламасăр юсаса тăрать. Çапла майпа государствăна вăл кăçал пин тенкĕлĕх перекет кӳчĕ.

Станци дежурнăйĕсем В. Таяшев, Морозов, Васянин юлташсем те лайăх ĕçлеççĕ, поездсене яланах вăхăтра йышăнса, вăхăтра ăсатаççĕ.

И. ВОРОБЬЕВ,
Станцири парторганизацин секретарĕ.

Ăмăрту кунĕсенче

ИĔПРЕÇ, июлĕн 31-мĕш. (Телефонпа). Станцире ĕçлекенсем железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне хутшăннăранпа икĕ уйăх иртрĕ. Çак вăхăтра вĕсем хăйсен ĕçĕнче хăшпĕр улшăнусем турĕç. Тавар турттаракан поездсен расписани тăрăх станцире 45 минута тăмалла. Пирĕн работниксем вĕсене вăтамран 25 минутăран ытла тытса тăмаççĕ, расписанипе пăхнинчен 20 минута малтан кăларса яраççĕ.

Стрелочниксем В. Герасимовпа Г. Клюковкин юлташсем стрелка хуçалăхне юсавлă тытаççĕ, çавăнпа вĕсен поездсене йышăнса ăсатас ĕçре кăлтăксем пулмаççĕ. Станци дежурнăйĕ Васильев юлташ та хăйĕн ĕçне лайăх тунине палăртмалла.

Вагонсене вăхăтра тиесе тата пушатса ăсатасси—станцин тĕп ĕçĕсенчен пĕри. Тырпул, апат-çимĕç тиесе килнĕ вагонсене нормăпа палăртнинчен хăвăртрах пушатаççĕ. Анчах йывăç-материалсене тиесе ăсатас ĕçре чăрмавсем пур-ха, вагонсем нормăпа пăхнинчен вăрахрах тăраççĕ. Ку вăл вăрман хатĕрлекен организацисем ĕç вăйĕ çителĕклĕ парса тăманнинчен килет.

МАКАРОВ.
Станци начальникĕ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕнче

Комсомолăн районри организацине пама ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тăвасси çинчен

1942 çулта тырпулсене пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçре чи лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлекен районри комсомол организацине пама, ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тунă.

Комсомолăн районсенчи организацийĕсен 1942 çулта тырпулсене вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртессишĕн, ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесе çитерессишĕн пыракан социализмлă ăмăртăвĕн УСЛОВИЙĔСЕМ

1942 çулта тырпулсене пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе лайăх результатсем кăтартса ĕçлессишĕн социализмлă ăмăртăва тухнă Сĕнтĕрвăрри, Шăмăршă тата комсомолăн ытти районсенчи организацийĕсен пуçарăвне ырласа, ВЛКСМ Чăваш Обкомĕ социализмлă ăмăртăвăн условийĕсене туса çирĕплетнĕ.

Комсомолăн районри организацийĕсем çак ĕçсене тунă пулсан социализмлă ăмăртура мала тухнă тесе шутланаççĕ:

тырпул пухса кĕртессинче комсомолецсем малта пынă пулсан, колхозра кашни комсомолец «отлично» пахалăхпа ĕçлесе нормăсене ытлашшипех тултарса пынă пулсан тата ыттисенчен нумайрах ĕç кунĕсем тунă пулсан;

уйхирте тырпулсем пулса çитнине сăнаса тăма кашни колхозрах контрольнăй постсем организациленĕ пулсан;

ялта массăсем хушшинчи политикăллă тата культурăллă ĕçе активлă хутшăннă пулсан:

а) колхоз тата бригада социализмлă ăмăртура илнĕ обязательствăсене «курăнмалла çĕре çырса çапнă пулсан;

б) социализмлă ăмăртăвăн результачĕсене кашни бригада, кашни звено тăрăх кунсеренех шута илсе пырсан, ĕçĕн тата обязательствăсене пурнăçланин результачĕсене показательсен хăми урлă, «боевой листокпа» стена хаçачĕ урлă, агитатор урлă тепĕр кунне ирех пĕлтерсе пырсан;

в) кашни колхозрах «Тырпулсене пухса кĕртес ĕçре малта пыракансем» текен хăма тунă пулсан, унта ĕç нормисене ирттерсе тултаракан лайăх çынсене вĕсем мĕнле ĕçленине кăтартса пынă пулсан;

г) уйхир тата трактор бригадисене, комбайн агрегачĕсене кашнине агитаторсем уйăрса лартсан, тырпулсене пухса кĕртес тĕлĕшпе агитаторсем тӳрĕмех производствăра ĕçленĕ пулсан;

итемсене, амбарсене, тырă типĕтмелли сушилкăсене, пахча-çимĕç усрамалли хранилищĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе активлă ĕçлесен;

тырра тăккаланине хирĕç кĕрешме тата тырпула сыхлама комсомолецсемпе çамрăксенчен постсем тунă пулсан;

пур жнейкăсем, лобогрейкăсем, тырă вырса кĕлте çыхакан машинăсем çумне те тырă пĕрчисене пухакан хатĕрсем (зерноуловительсем) туса вырнаçтарнă пулсан;

кĕлтесене çыхнă тата капана хывнă хыççăнах пучахсене пухма пионерсемпе шкул ачисене йышлăн ĕçе хутшăнтарнă пулсан;

пушара хирĕç кĕрешме çĕнĕ дружина организацилесен е унччен дружинăн ĕçне лайăхлатсан, итемсем çинче, капансем çывăхĕнче шыв тултарнă пичкесем, хăйăр тултарнă ещĕксем кирлĕ чухлĕ хатĕрлесе лартнă пулсан;

комсомолăн колхозсенчи пуçламĕш организацийĕсем хушшинчи социализмлă ăмăртăва анлă сарнипе тырпулсене кĕске срокра, пĕр тăкаксăр пухса кĕртессине пурнăçланă пулсан, колхозсемпе совхозсем государствăна тырпул тата ытти продуктсем парас плана пĕтĕмпех вăхăтра пурнăçа кĕртнĕ пулсан.

Тырпулсене пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсен хатĕрлевĕсене ирттерес ĕçри лайăх результатсемшĕн социализмлă ăмăртăва хутшăнса, ăмăртура малти вырăна йышăннă районри комсомол организацине ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне параççĕ.

Комсомолăн чи лайăх ĕçлекен районри тата пуçламĕш организацисене, ВЛКСМ комитечĕн секретарĕсене, тырпул пухса кĕртес ĕçре малта пыракан уйрăм комсомолецсене республикăри Хисеп хăми çине çыраççĕ тата ВЛКСМ Обкомĕн грамотисемпе наградăлаççĕ.

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли—ăшă тумтирсем

КАНАШ. (Хамăр корр.). Ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ĕçлекен хулари комисси хăйĕн ĕçне вăйлатрĕ. Юлашки вăхăтра хулара Хĕрлĕ Çар валли ăшă япаласем чылай пухнă.

Июлĕн 31-мĕш тĕлне хулара пĕтĕмпе 157 мăшăр çăматă, 196 ăшă кĕпе, 140 мăшăр алшишсемпе перчаткăсем, 250 тунă тир, 57 чĕрĕ тир, 76 алшăлли, 51 простыня, 43 минтер пичĕ, 100 килограмм çăм, 14 куртка, 12 мулаххай, ăшă тумтирсем туянма 23 пин тенкĕ укçа пухăннă.

Хулара тир тăвакан тата çăматă йăвалакан мастерскойсем уçнă.

Килхуçи хĕрарăмĕсем ăшă тумтирсем пухас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Урам комитечĕн председателĕсем Владимировăпа Иванова лайăх ĕçлеççĕ. Килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче пĕтĕмпе 5 пин тенкĕ укçа пухнă.

Инвалидсен «Красный воин» артелĕ 20 мăшăр çăматă йăваласа панă, 20 простыня, 20 минтер пичĕ çĕлесе панă.

П. НИКОЛАЕВ.

Ют çĕршывсенче

Индин национальнăй конгресс исполкомĕн бюровĕ лартнă требованисем çине Англи правительстви мĕнле пăхать

Общинăсен палатинче Эмери тунă заявлени

ЛОНДОН, июлĕн 31-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Индипе Бирма ĕçĕсен министрĕ Эмери Индин национальнăй конгресс исполкомĕн бюровĕ йышăннă резолюци çине Англи правительстви мĕнле пăхни çинчен общинăсен палатинче заявлени тунă. Çав резолюци англичансем Индирен пуçпулса тăрассине халех пăрахăçа кăларма ыйтать. Резолюцие конгресăн исполкомĕ ратификацилеме тивĕçлĕ. «Индин конституциллĕ пуласлăхĕ тĕлĕшпе Англи правительстви лартакан тĕллеве, — тенĕ Эмери, — Стаффорд Криппс Англи правительстви ячĕпе Инди общественноçĕн представителĕсене панă декларацире палăртнă. Анчах та Индири обществăллă шухăшăн тĕп сийĕсем çав декларацие майлă пулмарĕç, мĕншĕн тесен, çав проектра Индири партисен представителĕсем йышăнма пултараймалăн пĕр сĕнӳ пулчĕ. Çавна пула Англи правительстви декларацин проектне каялла илчĕ. Çапах та Англи правительстви халĕ те çав сĕнӳре кăтартса панă хăйĕн шухăшĕсенех тытать».

Эмери çакна палăртнă: Индин национальнăй контресĕ ыйтнине тивĕçтернĕ пулсан, çакă вара вăл Индие тытса пырас ĕçре сложнăй механизм пĕтĕмĕшпе пăсăлса каясси патнех илсе çитернĕ пулĕччĕ, çав вăхăтрах вăрçă обстановки вăй-хăватсене вĕçне çитиччен мобилизацилеме, пĕр-пĕрине килĕштерсе тăччăн çыхăнса ĕçлесе союзлă державăсен мĕнпур ресурсĕсене пĕрлештерме ыйтать.

«Англи правительстви, — тенĕ вăл,— Индие самоуправлени туса хумашкăн пур майсене те пама малашне те килĕшсе тăрса, Индин национальнăй конгресĕн исполком бюровĕ тытса пыракан политика майлă тăракан çынсене, халь пулса тăнă лару-тăрăва татса панă çĕрте Инди правительстви нимĕнле утăм тăвасси умĕнче те чарăнса тăрас çукки çинчен калакан политика майлă тăракан çынсене çивĕччĕн асăрхаттарса хăвармасăр юлма пултараймасть».

Эмери çакна пăнса тăни çинчен каланă: Инди халăхĕ «катастрофа патне илсе çитерме пултаракан движени майлă пулмĕ, пачах та урăхла, этемлĕхĕн пĕтĕмĕшлĕ тăшманĕсене хирĕç кĕрешес ĕçе вăл хăйĕн мĕнпур вăйхалне парĕ», тенĕ.

Лейбористсем Эммонпа Финуэлл Англи правительствинчен Индипе çĕнĕрен калаçу пуçлама ыйтнине хирĕç ответлесе, Эмери çапла кăтартса панă: «Ку тĕлĕшпе нумай тĕрлĕ калаçусем пулса иртни çинчен Криппс общинăсен палатине пĕлтерсеччĕ ĕнтĕ» тенĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июлĕн 31-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: июлĕн 30-мĕшĕнче, кăнтăрла иртсен, Англин истребителĕсем хĕвелтухăçĕнчи Гравелин районĕнчен пуçласа хĕвеланăçĕнчи Бретань çыранĕ патĕнчи Ле-Сет-Иль утравĕсем патне çитиччен тăсăлса выртакан территори çинче боевой операцисем туса ирттернĕ.

Июлĕн 30-мĕшĕнче каçхине Англин истребителĕсем Сент-Омерти аэродромсемпе ытти объектсем çине вĕçсе пырса тапăннă. Бомбăсем ангарсемпе аэродром çинчи ытти çуртйĕрсем çине лекнине палăртнă.

Июлĕн 31-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле противникăн авиацийĕ Англин вăта çĕрти графствисенчен пĕрин тĕлĕнче чылай пысăк активлăх кăтартнине палăртнă. Противникăн самолечĕсем Англин кăнтăрти хулисенчен пĕрин çине вут хыптаракан бомбăсем пăрахнă. Июлĕн 31-мĕшĕнче ирхине ирех Лондонра сывлăшран килсе тапăнни çинчен пĕлтерекен тревога пулнă.

ГЕРМАНИ ПРОМЫШЛЕННОÇĔНЧИ ТАТА ТРАНСПОРТ ÇИНЧИ ДИВЕРСИСЕМ

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 31-мĕш. (ТАСС). «Дер дейче Фольксвирт» ятлă гитлерла журнал çапла çырать: «Юлашки вăхăтра Германи промышленноçĕнче пушарсем час-часах туха пуçларĕç. Промышленноçри вăйлă пушарсем производство ĕçне пăсса яраççĕ. Чĕртавар пĕтет, çунса пăсăлнă машинăсем вырăнне çĕннисене лартас пулать,—çаксем вĕсем унсăр та вăйран тухса ĕçлекен çар промышленноçĕ умне пысăк йывăрлăхсем кăларса тăрататççĕ».

«Фелькишер Беобахтер» ятлă хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Берлинра йывăç каскалакан пĕр завод мĕнпур машинисемпе тата чĕртаварĕпе пĕрлех çунса кайнă. Çав кунах Берлин тулашĕнчи Лихтенбергра тата тепĕр фабрика çунса кайнă. Берлинра пĕр Древс ятлă паллă мар çынна персе вĕлернĕ. Вăл 17 хутчен вут тĕртнĕ.

Негеймра чугунçулпа пыракан поезда ӳпĕнтерсе ярса, материаллă пысăк сиен кӳнĕ.

«Данцигер Форпостен» ятлă хаçат çапла çырать: «Июнĕн 26-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Диршаупа Конитц хушшинче выртакан участокри чугунçул çинче каллех катастрофа пулнă. Хальхинче унта таварсем турттарса пыракан поезда ӳпĕнтерсе янă, чылай пысăк сиен кӳнĕ. Айăплисене тытакана 250 пин марка укçа памалла тунă».

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ДЮССЕЛЬДОРФ ÇИНЕ ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПАННИ

ЛОНДОН, августăн 1-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 1-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен питĕ пысăк соединенийĕ Дюссельдорф çине вĕçсе пырса тапăннă.

Дюссельдорф вăл Германин хурçă шăратакан промышленноçĕн центрĕ пулса тăрать. Унта çар тĕлĕшĕнчен питĕ паха шутланакан заводсем пур.

КАНАДА ВОЙСКИСЕМ АНГЛИЕ ПЫРСА ÇИТНИ

ЛОНДОН, июлĕн 31-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Англие Канада войскисен пысăк континенчĕ пырса çитни çинчен пĕлтерет. Вăл шутра сывлăш çар вăйĕсен персоналĕ те пур.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ФРАНЦИ ХАЛĂХНЕ ВЫÇĂ ВИЛМЕЛЛЕ ТУСА ХУРАÇÇĔ

СТАМБУЛ, июлĕн 30-мĕш. (ТАСС). Лионра тухакан «Сет Жур» ятлă журнал Франци халăхĕн сывлăхĕ тата ӳчĕ-кĕлетки çинчен нумай даннăйсем кăтартса парать. Франци халăхне ăна нимĕçсем оккупациленĕренпе чи кирлĕ продуктсемсĕр тăратса хăварнă. Çав халăха медицина енчен пăхса тухни çакна кăтартнă: стариксен, продуктсене ытти çынсенчен сахалтарах илсе тăракансен, йывăрăшĕ 50 процент таран чакнă. Рабочисен йывăрăшĕ, вăтамран илсен, 30 процент чакнă, хресченсен йывăрăшĕ—15 процент чакнă.

Госпитальсем пурте начарланса çитнине пула вилекен çынсемпе тулса ларнă. Туберкулезпа чирлекенсене, госпитальсенче вырăн çук пирки, унта халь илмеççĕ ĕнтĕ. Виши правительствин представителĕсем официальнăй йĕркепе каланă тăрăх, 12 миллион француза яхăн ĕç укçи ытла та сахал ĕçлесе тупаççĕ, вĕсем çынна чи сахал тесен мĕн чухлĕ продукт кирлинчен чĕрĕкне кăна тата аран-аран кăна карточкăсемпе илме пултараççĕ.

Оборона фондне

КАЛИНИНО. Мăн Явăшри Ленин ячĕпе тăракан колхозри комсомолец П. Языков юлташ хăйĕн бригадинчи колхозниксем хушшинче агитацилле ĕçе куллен туса пырать. Çав бригадăри колхозниксем уйхирте тимлĕн ĕçлеççĕ, фронта пулăшса пыма тăрăшаççĕ. Çак кунсенче ку бригада членĕсем оборона фондне заем облигацийĕсем 2000 тенкĕлĕх тата пĕр пин тенкĕ ытла укçан пачĕç.

П. ГРИГОРЬЕВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Агитаторсене пулăшма

Ялти агитаторсен задачисем

3. Пур работниксене те ăмăртăва хутшăнтармалла

Колхозсен, совхозсен тата МТС-сен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕ çуракине ăнăçлăн вĕçлеме май пачĕ. Тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра социализмлă ăмăртăва татах та анлăрах сарас пулать.

Агитатор—бригадăсем, колхозниксемпе колхозницăсем, совхозсемпе МТС-сен работникĕсем хушшинчи социализмлă ăмăртăвăн организаторĕ пулма тивĕçлĕ. Агитаторăн «Уйхирте ĕçлекен çынсем пурте ăмăртса ĕçлемелле!» текен лозунга пурнăçа кĕртме тăрăшас пулать. Кашни колхознике, совхозăн тата МТС-сен кашни работникне колхозсен, совхозсен, МТС-сен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн условийĕсемпе паллаштармалла, ăмăрту мĕнле пыни çинчен пĕлтерсе тăрассине лайăх йĕркелемелле. Кашни колхозник хăйĕн обязательствисене, звенон, бригадăн, колхозăн обязательствисене пĕлсе тăтăр, вĕсене кам мĕнле пурнăçласа пынине кашни кун пĕлсе тăма пултартăр.

Колхозсенче, совхозсемпе МТС-сенче чылайĕшĕнче витринăсем пур. Вĕсем çине колхозниксем, совхозсемпе МТС-сен рабочийĕсем фронта мĕнле пулăшса пыни çинчен, паян кам ыттисенчен лайăхрах ĕçлени çинчен кашни кунах çырса тăрас пулать.

Ахалех паллă ĕнтĕ, агитаторăн ĕçĕ социализмлă ăмăртăвăн результачĕсене шута илнинче кăна мар. Бригадăра кĕлтесем çыхас, çĕмелсем тăвас е кĕлтесене капана хывас ĕç кая юлса пыни палăрсан, агитаторăн çав участокра ĕçлекен çынсемпе калаçмалла, кая юлнин сăлтавне пĕлме тăрăшмалла. Кирлĕ пулсан, агитатор çав участокра ĕçлекенсене пулăшу парас ĕçе бригадир урлă организацилет.

Малта пыракансен ĕçри опытне анлă сарни уйрăмах кăçал питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Колхозсемпе совхозсен уйхирĕсенче ĕçлеме хуласенчен çĕршер пин çын пырать. Вĕсене ĕçлеме вĕренсе çитмешкĕн пулăшмалла, ĕçри лайăх, стахановла опытпа паллаштармалла. Уборка пуçланас умĕн тата тырпулсене пухса кĕртес ĕç пынă вăхăтра агитаторăн хуларан пынă çынсем хушшинче калаçусем ирттермелле—уборкăна вăхăтра ирттерни мĕн пек пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен, тырпулсене пĕр тăкаксăр пухса кĕртессине мĕнле организацилемелли çинчен т. ыт. çинчен те каласа кăтартмалла.

Хуласенчен пынă ĕççыннисем хушшинче хутла лайăх пĕлекен работниксем нумай. Агитаторăн çав çынсене стена хаçачĕсемпе «боевой листоксен» редакци коллегийĕсенче ĕçлеме, колхозниксем хушшинче уйрăм калаçусем ирттерме, политикăллă тата художествăллă литература вуласа пама хутшăнтармалла.

Кăçалхи çуракинче ăмăртура малта пынине палăртма стахановла ĕçлекен трактористсен машинисем çине пĕчĕк хĕрлĕ ялавсем çакас йĕрке тунăччĕ. Уйра хĕрлĕ ялав çакнă машина пырать, вара кашни иртсе çӳрекенех çав машинăпа малта пыракан çын, стахановец ĕçленине курать. Пĕчĕк хĕрлĕ ялавсене ĕç нормисене ирттерсе тултаракан работниксен комбайнĕсем, тракторĕсем, жнейкăсем, молотилкăсем çине те çакмалли йĕрке тăвас пулать.

Агитаторăн малта пыракансемпе кая юлакансене кăна мар астăвас пулать, унăн тата вăтам ĕçлекенсем çинчен те асра тытмалла, вĕсем вара яланах ытларах пулаççĕ. Кашни рядовой колхозник ĕç тухăçлăхне 5—10 процент ӳстерсен те, бригадăра, колхозра чылай нумайрах ĕç тума пулать. Сталин юлташ: «Лайăх ĕçлекенсене хăваласа çит, пĕтĕмĕшле çĕкленӳ тăвассине ĕçе кĕртме тăрăш!»—тесе каланă. Çапла вара, рядовой, вăтам колхознике ĕçре хавхалантарса пымалла, унăн кашни çитĕнĕвĕ, вăл пысăках мар пулсан та, пысăк ĕç пулса тăнине ăна хăйне тата пĕтĕм звенона ăнлантарса парас пулать. Ун чухне вăл тата лайăхрах ĕçлеме, тата пысăкрах çитĕнӳсем тума тăрăшĕ. Колхозницăсем çине ытларах çавăрăнса пăхмалла. Халĕ ялта хĕрарăм ĕçе татса паракан вăй пулса тăрать. Нормăна ирттерсе тултаракан кашни хĕрарăм çинчен пĕтĕм колхоз пĕлтĕр.

Агитаторăн хăй туса ирттерекен кашни ĕçех бригада производствăри заданисене тултарассишĕн мĕнле кĕрешнипе тачă çыхăнтарас пулать. Бригадăри колхозниксем пурте ĕçе пысăк пахалăхпа туса нормăсене тултараççĕ пулсан, тырпулсене пухса кĕртесси пĕр тăкаксăр пулса пырсан,—ку вара агитатор лайăх ĕçленине пĕлтерет.

Кăçал тырпулсене пухса кĕртес ĕçре комбайнсемпе, çавăн пекех уборкăра ĕçлемелли ытти простой машинăсемпе пуринпе те туллин усă курас пулать. Тырă вырмалли машинăсем тырă вырма тухнă малтанхи кунранах (пулнă тырăсене суйласа вырма тытăннă кунранах) уйхирте ĕçлемелле.

Жнейкăсемпе лобогрейкăсем çинче ĕçлекен çынсем, çавăн пекех кĕлте çыхакансем нормăсене ирттерсе тултарса пыма тăрăшчăр тесен, вĕсене ĕç нормисем çинчен, мĕнле ĕç тунăшăн мĕн чухлĕ ĕçкунĕ парасси тата ыттисем çинчен те каласа кăтартмалла. Агитаторăн тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте ĕçлекен машинăсен ĕç тухăçлăхне ӳстерни мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине ăнлантарса памалла, машинăсемпе выракансем, кĕлте çыхакансем ăмăртса ĕçлессине организацилес пулать.

Кăçал уборкăра çурласемпе тата çавасемпе те тырă вырма тăрăшмалла. Агитаторăн çакна ăнлантарса парас пулать: çурлапа тата çавапа ĕçлесе мĕн чухлĕ нумайрах тырă вырса пухăпăр, уборкăна çавăн чухлĕ хăвăртрах ирттерме пултарăпăр, тăкаксем сахалтарах пулĕç, фронт валли питех те кирлĕ горючие çавăн чухлĕ нумайрах перекетлĕпĕр.

Тырра тăкакланине хирĕç кĕрешесси çине агитаторăн уйрăмах хытă çавăрăнса пăхас пулать. Тырпулсене лайăх тата таса выракансем çинчен, вырнă çĕрте, кĕлте çыхнă çĕрте тата авăн çапнă чухне тырра тăккаламан, пучахсене йăлтах пухакан, итемсемпе сушилкăсенче кирлĕ пек йĕркелĕх тунă бригадăсем çинчен каласа кăтартасси агитаторăн хисеплĕ ĕçĕ пулса тăрать.

Кăçал тырпулсене пухса кĕртес ĕçре çирĕп дисциплина тата питех те организованно пулни кирлĕ. Ун чухне вара вăйлă тырпула пĕтĕмпех тата вăхăтра пухса кĕртме пултарăпăр.

УПРАВЛЕНИЕ КИНОФИКАЦИИ ПРИ СНК ЧУВАШСКОЙ АССР

производит набор слушателей на Казанские курсы механиков звукового кино.

Начало занятий 20 августа 1942 года. На курсы принимаются лица по командировкам Межрайотделов Управления Кинофикации при СНК ЧАССР с образованием не ниже 7 классов.

Курсанты, сдавшие испытания, обеспечиваются стипендией и квартирами. Об условиях справляться в отделе кадров Управления Кинофикации (телефон № 3-95) и в Межрайонных отделах.

2—1.

Чебоксарский коммунально-строительный техникум объявляет прием студентов на все курсы техникума.

Студенты обеспечиваются столовой закрытого типа.

Об условиях приема смотри в «Красной Чувашии» от 16 июля 1942 года, за № 164.

ДИРЕКЦИЯ.

Чебоксарской Техно-ткацкой фабрике требуются:

электромонтер, столяры, батанщик, плотники, охранники, возчики.

Принимаются женщины и подростки на обучение ткачихами, плетельщицами.

Обращаться: ул. Чувашская, помещение Черепичного завода. Тел. 7-46. 2—2.

1942 года 26 июля сбежала лошадь из города Чебоксары, принадлежащая колхозу «Новая жизнь», Туруновского с/с., Ишлейского р-на, Чувашской АССР, под кличкой «Бырка». Масть кораковая, год рождения 1933 г., кобыла, рост 132 см.

Шăхасан районĕнчи Çĕнĕ Мами ялĕнче ЛАША ÇУХАЛЧĔ. Паллисем çаксем: çут турă, çамки çинче тата йĕнерчĕк вырăнĕнче пӳрне пусăм пек шурă пур, çӳллĕшĕ 132 см, 1931 çулта çуралнă.

Тĕлне пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Калинински район, Çĕньял, „Правда" колхозăн правленийĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1329 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.